имени В. И. ЛЕНИНА
Отдел Национальной Литературы

26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 МАРТ 21 ВЫРСАРНИКУН 63(6300) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

2

СССР СОВНАРКОМĔПЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕТĔНЧЕ

Государствăн 1943 çулта ялхуçалăхне аталантармалли планĕ çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çакна палăртаççĕ: вăрçă вăхăтĕнчи уйрăм условисенче, нумай тракторсемпе лашасене тата транспорт средствисене оборона нушисем валли илнĕ вăхăтра ,çавăн пекех тата ялхуçалăхĕнчен квалификациллĕ работниксен чылай пысăк пайне Хĕрлĕ Çара мобилизациленĕ условисенче — колхозсемпе совхозсем кĕрхи тата çурхи тырăсене ăнăçлăн акса хăварчĕç, апат-çимĕçе каякан тĕп культурăсем — тĕштырă, çĕрулми, пахча-çимĕçсем тата сахăр кăшманĕ акнă çĕр лаптăкне чылай ÿстерчĕç. Хĕвелтухăçĕнче 1942 çулта сахăр кăшманĕ, клещевина, махорка тата ытти техникăллă культурăсем акса тумалли çĕнĕ пысăк базăсем туса хунă.

Уйхир ĕçĕсене Горький, Свердловск, Молотов, Мускав, Иваново, Ярославль, Калинин, Тула, Рязань, Вологда облаçĕсенчи, Чăваш, Утмурд АССР-сенчи, Узбек, Киргиз, Таджик, Грузин тата Армян ССР-сенчи колхозсемпе совхозсем лайăх туса ирттерчĕç. Çÿлте асăннă облаçсемпе республикăсенчи колхозсем, МТС-сем тата совхозсем çуракине чи кĕске срокра туса ирттерчĕç, çĕртме сухине вăхăтра туса ирттерчĕç, кĕрхи тырăсем акăнакан çĕр лаптăкне ÿстерчĕç, кĕрхи çĕртме сухине нумай туса хăварчĕç. Çак облаçсемпе республикăсенче государствăна тырă, çĕрулми, пахча-çимĕçсем, йĕтĕн памалли план та ытти облаçсемпе республикăринчен лайăхрах пурнăçа кĕрсе пычĕ.

Колхозсенче ĕç дисциплини çирĕпленчĕ, колхозниксем ĕç нормисене лайăхрах пурнăçа кĕртсе пычĕç тата ĕç кунĕсен минимумне тултарман колхозниксен хисепĕ чылай сахалланчĕ. 1942 çулта колхозсенче уйхир ĕçĕнче чĕрĕ туртăм вăйĕпе тата лаша кÿлсе ĕçлемелли инвентарьсемпе лайăхрах усă курнă.

Çакăнпа пĕрлех ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çакна палăртаççĕ: 1942 çулти ялхуçалăхĕнчи тĕп заданисене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе Пенза, Саратов, Куйбышев, Чкалов, Челябинск, Омск, Кустанай тата Çурçĕр Казахстан облаçĕсенчи, Алтай крайĕнчи, Тутар, Башкир АССР-сенчи колхозсем, МТС-сем тата совхозсем çителĕксĕр ĕçлерĕç. Кăтартнă облаçсемпе республикăсенчи колхозсемпе МТС-сем тата совхозсем нумайĕшĕ çурхи тата кĕрхи культурăсем акмалли задание хисеп енĕпе пурнăçа кĕртрĕç пулин те, акас умĕнхи ĕçсене начар пахалăхпа тусă ирттерчĕç, акмалли сроксене вăраха ячĕç тата тырпул тухăçлăхне ÿстерессишĕн çителĕксĕр кĕрешрĕç.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ мĕнпур колхозсене, МТС-сене тата совхозсене, районсенчи, облаçсенчи, крайсенчи, республикăсенчи партипе совет тата çĕрĕç органĕсене çакăн çине çавăрăнса пăхма хушаççĕ: 1943 çулта тырпул тухăçлăхне хăпартассишĕн тата тĕштырăсемпе ялхуçалăхĕнчи ытти продуктсен пĕтĕм хисепне ÿстерессишĕн пыракан кĕрешÿре пуринчен ытла уйхир ĕçĕсен пахалăхне лайăхлатасси çине, çуракине кĕске срокра туса ирттересси çине, лайăх пахалăхпа сухалассие, ака умĕнхи ытти ĕçсене лайăх пахалăхпа тăвасси тата лайăх пахалăхпа акасси çине, вырăнти удобренисемпе пĕтĕмпех усă курасси çине, ялхуçалăх культурисене сиенлекен хурткăпшанкăсемпе тата çумкурăкĕсемпе кĕрешес тĕлĕшпе пур ĕçсене те туса ирттересси çине çавăрăнса пăхмалла.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1943 çулта ялхуçалăх культурисем акмалли çĕр лаптăкне палăртса çирĕплетнĕ, ялхуçалăх культурисем акăнакан çĕр лаптăкне, 1942 çулта тырпул пухса илнĕ çĕр лаптăкĕпе танлаштарсан, 6,4 миллион гектар чухлĕ ÿстернĕ, вăл шутра тĕштырă культурисен лаптăкне 1942 çултипе танлаштарсан 3,9 миллион гектар чухлĕ ÿстернĕ. Çакăнпа пĕрлех 1943 çулта çурхи культурăсене акмалли плана, 1944 çул валли кĕрхи культурăсем акса хăвармалли плана, тĕштырăсен, техникăллă культурăсен тата çĕрулмин тухăçлăхне ÿстермелли плана, МТС-сем тракторпа тумалли ĕçсен планне тата агротехникăллă мероприятисен планне палăртса çирĕплетнĕ.

Государствăн 1943 çулта ялхуçалăхне аталантармалли планне пурнăçа кĕртес шутпа, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ **çапла йышăнна:**

I. Колхозсене, МТС-сене тата совхозсене çуракине хатĕрлесси çинчен

1. СССР Наркомземне, СССР Наркомсовхозне, СССР Наркомпищепромне, СССР Наркоммясомолпромне, Наркомвнешторга, облисполкомсене, крайисполкомсене, союзлă тата автономлă республикăсен совнаркомĕсене, парти обкомĕсене, крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене вунă кун хушшинче ялхуçалăх ĕçĕсен планне районсем, совхозсем, МТС-сем, колхозсем, тата уйрăм хуçалăхсем патне çитерме хушас.

2. Союзлă тата автономлă республикăсен совнаркомĕсене, облисполкомсене, крайисполкомсене, парти обкомĕсемпе крайкомĕсене тата союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çапла тума хушас:

а) тĕштырă культурисен çак постановленире кăтартнă вăтам тухăçлăхне шута илсе, уйрăм тĕштырă культурисен тухăçлăхне ÿстермелли заданисене палăртса çирĕплетмелле, çавăн пекех тата техникăллă культурăсен, пахча-çимĕç, выльăх-апачлĕх лартнă тата улма-çырла культурисен тухăçлăхне ÿстермелли заданисене палăртса çирĕплетмелле (вĕсен тухăçлăхĕ мĕнле пулмаллине ку постановленире палăртман);

б) парниксемпе теплицăсем тумалли, вăрман лартмалли, тут йывăççине ĕрчетмелли, улма-çырла йывăççисен, виноградсен тата субтропика йывăççисен питомникĕсене лартмалли плансене, çавăн пекех тата çарансемпе кĕтÿ кĕтмелли вырăнсене лайăхлатас тĕлĕшпе тумалли ĕçсен планне çирĕплетсе районсемпе колхозсем патне çитермелле;

в) шăварса тăракан çĕр çине мĕн чухлĕ тырпул акмаллине тата унăн тухăçлăхĕ мĕн чухлĕ пулмаллине кăтартса районсемпе колхозсене заданисем памалла, шăварса тăракан çĕрсене пĕтĕмĕшпех акса хăвармалла тăвас пулать.

3. СССР Наркомземне, СССР Наркомсовхозне, облисполкомсене, крайисполкомсене, союзлă тата автономлă республикăсен совнаркомĕсене, парти обкомĕсене, крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çапла тума хушас:

а) колхозсен производствăллă планĕсене, МТС-сен промфинпланĕсене тăвас ĕçе тата МТС-семпе колхозсем хушшинче договорсем тăвассине вунă кунлă срокра вĕçлемелле;

б) çав срокрах колхозсенчи производствăллă бригадăсемпе звеносене йĕркелесе çитермелле, вĕсем саланса кайнă çĕрте çĕнĕ бригадăсемпе звеносем организацилемелле, администраци ĕçĕнче тата ытти пулăшакан ĕçсенче ĕçлекен колхозниксен хисепне май пур таранах чакармалла. Бригадăсене участоксем, инвентарь тата туртăм вăйĕ çирĕплетсе панипе паманнине тĕрĕслемелле, туртăм вăйĕпе тата ялхуçалăх машинисемпе усă курас ĕçре обезличкăна пĕтермелле. Трактор бригадисен тата уйхир бригадисен çураки вăхăтĕнчи ĕç планĕсене туса çирĕплетмелле, планра уйрăм ĕçсене мĕнле срокра тумаллине, колхозниксене, тракторсене тата туртăм вăйне хирти уйрăм участоксенче тата тĕрлĕ ĕçсенче мĕнле вырнаçтарса тухмаллине палăртмалла;

в) кашни звенона техникăллă культурăсем, пахча-çимĕçсем, кукуруза, çĕрулми тата ытти культурăсем акмалли çĕр лаптăкне çирĕплетсе памалла, анчах кашни звенона, правило пекех, 3—4 культурăран ытла мар, пĕр çулталăклăх срокран кая мар çирĕплетсе памалла;

г) 1943 çулти ялхуçалăх ĕçĕсен тата тракторпа тумалли ĕçсен планне тултарас тĕлĕшпе звеносем, бригадăсем, колхозсем, МТС-сем, совхозсем тата районсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн организацилемелле, уйхир ĕçĕсем пуçланиччен икĕ эрне малтан вĕсем çуракине мĕнле хатĕрленнине пĕр-пĕри тĕрĕслессине пурнăçа кĕртмелле;

д) уйхир ĕçĕсем пуçланиччен вунă кун малтан кашни колхозрах ачасен яслисене, ачасен площадкисене, хирти стансене тата пĕрлешсе апатланассине организацилемелле, çак ĕç валли кадрсем, çуртйĕрсем тата оборудованисем уйăрса хатĕрлемелле;

е) çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли мероприятисене районсенче, колхозсенче тата совхозсенче мĕнле пурнăçа кĕртнине тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла. Область, край е республика 1943 çулти çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен 1943 çулти апрелĕн 5-мĕшĕнчен кая юлмасăр СССР Совнаркомне пĕлтермелле, çавăн пек отчетсем 1943 çулти мартăн 30-мĕшĕ тĕлне тăратма райисполкомсене хушмалла.

4. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «МТС-сен тракторĕсене, комбайнĕсене тата ялхуçалăх машинисене 1943 çулта уйхир ĕçĕнче ĕçлеме хатĕрлесси çинчен» 1943 çулти февралĕн 27-мĕшĕнче йышăннă постановленин 15-мĕш статьи çумне хушса, çакăн пек йĕрке тăвас: газогенераторлă СХТЗ тракторпа ĕçлесе хăйĕн сменинче календарлă 15 кун хушшинче, сухаланине, сÿреленине, культиваци тунине тата акнине çемçе суха çине куçарса шутласан, 30 гектартан кая мар ĕçленĕ трактористсем 35 ĕçкунĕ чухлĕ премии илеççĕ; кунсăр пуçне, МТС трактористĕсем çав срокрах 30 гектартан ирттерсе ĕçленĕ кашни гектаршăн пĕрер ĕçкунĕ хушса илеççĕ.

Урапаллă, газогенераторлă СХТЗ тракторсемпе ĕçлемелли ĕç нормине шĕвĕ топливопа ĕçлекен СХТЗ тракторсен норминчен 25 процент чухлĕ сахалтарах пулмалла тăвас.

5. Республикăсен совнаркомĕсене, крайсемпе облаçсенчи исполкомсене МТС-семпе совхозсен газогенераторлă тракторĕсем валли сывăх вырнаçса тăракан вăрман участокĕсенче фондсем уйăрса пама хушас.

6. СССР Совнаркомĕ 1941 çулти мартăн 27-мĕшĕнче йышăннă 701-мĕш номерлĕ постановление улăштарса, 1943 çулта тракторсемпе комбайнсем пĕрре юсанă хыççăн тепре юсиччен ĕçлес срока пĕчĕклетес тата тракторсене, комбайнсемпе ялхуçалăх машинисене ремонта тăратмалли нормăна вăтамран 20 процент чухлĕ ÿстерес.

Çак улшăнусене шута илсе, тракторсемпе комбайнсем пĕрре юсанă хыççăн тепре юсиччен ĕçлемелли срока, çавăн пекех тракторсене, комбайнсене тата ялхуçалăх машинисене ремонта тăратмалли нормăна уйрăм облаçсем, крайсем тата республикăсем тăрăх ÿстерме СССР Наркомземне ирĕк парас.

7. СССР Наркомземне, СССР Наркомсовхозне, республикăсен совнаркомĕсене, крайсемпе облаçсенчи исполкомсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, ВКП(б) крайкомĕсемпе обкомĕсене, вырăнсенчи çĕрĕç органĕсене, МТС-семпе совхозсен директорĕсене çапла тума хушас:

а) çуркуннехи уйхир ĕçĕсем пуçланас тĕле заправка тумалли урапасене çителĕклĕх туса хатĕрлемелле, вĕсем çинче горючи ямалли пичкесем, насоссем тата вак-тĕвек инвентарьсем пулмалла. Тракторсемпе трактор бригадисем валли тракторсене тата вĕсенчен кăкарса ĕçлекен машинăсене техника енĕпе пăхса усрама кирлĕ инструментсемпе приспособленисене туса хатĕрлемелле;

б) 1943 çул хушшинче мĕнпур МТС-семпе совхозсенче трактористсен, комбайнерсен тата бригадирсен техникăллă пĕлĕвĕсене ÿстерес тĕлĕшпе вĕсене техникăна вĕрентес ĕçе организацилемелле;

в) çуркуннехи уйхир ĕçĕсем пуçланас тĕле МТС-сенче трактор бригадисене техника енĕпе пулăшма автомашинăсемпе урапасем çинче куçса çÿрекен мастерскойсем организацилемелле; куçса çÿрекен мастерскойсем валли кирлĕ оборудованине, инвентарьсене тата приспособленисене тупса хатĕрлемелле, çав мастерскойсене 20 трактор валли пĕр мастерской пулмалла туса участоксенчи механиксем çумне çирĕплетмелле.

МТС-семпе колхозсене вĕсем договорсем тунă чухне çав куçса çÿрекен мастерской валли колхоз лаша уйăрса парассине палăртса хума сĕнес.

8. Вырăнти материалсемпе усă курса трактор бригадисенче трактористсен тата колхозсен вăйĕпе тракторсене техника енĕпе пăхса усрамалли пĕчĕк мастерской-навессем тăвас тĕлĕшпе тата бригадăри горючине сыхласа усрама хирсенче пĕчĕк нÿхрепсем тăвас тĕлĕшпе трактор бригадисемпе колхозсем тата малта пыракан МТС-сем пуçарнă пуçарăва ырлас.

СССР Наркомземне, республикăсен совнаркомĕсене, крайсемпе облаçсенчи исполкомсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, ВКП(б) крайкомĕсемпе обкомĕсене, вырăнсенчи çĕрĕç органĕсене, МТС-сен директорĕсене 1943 çулта трактор бригадисенче пĕчĕк мастерской-навессене тата хирсенчи нÿхрепсене тăвас ĕçе организацилеме хушас.

9. Республикăсен совнаркомĕсене, крайсемпе облаçсенчи исполкомсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене, ВКП(б) крайкомĕсемпе обкомĕсене калчасем пăхса ÿстерме тата тырпула пухса кĕртме кирлĕ ялхуçалăх инвентарĕсене (катмаксене, сенĕксене, çурласене тата ыттине те) вырăнти промышленность предприятийĕсенче кирлĕ чухлех туса кăларас ĕçе организацилеме хушас.

10. СССР Госбанкне çураки ĕçĕсене ирттерме 1943 çулхи июнĕн 1-мĕшĕччен горючи кÿме, ытти счетсем тăрăх банкпа расчет мĕнле пулса пынине пăхмасăрах, совхозсене кредит пама хушас.

11. Совхозсенчи ялхуçалăх ĕçĕсене тума, совхоз территорийĕнче пурăнакан ĕçлеме пултаракан çынсене 14 çултан пуçласа пурне те обязательнăй йĕркепе ĕçе хутшăнтарма совхоз директорĕсене ирĕк парас.

СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) 1942 çулхи сентябрĕн 22-мĕшĕнче йышăннă 1.570-мĕш номерлĕ постановленин 14-мĕш статьинче кăтартса панă кулленхи ĕç нормисене тултарнăшăн трактористсене натурăпа премилессине çураки вăхăтĕнче СССР Наркомсовхозăн, Наркомпищепромăн тата Наркоммясомолпромăн совхозĕсем çине те сарас.

12. Совхозсемпе МТС-сем валли горючи кÿрессисĕр пуçне тата инçетри вырăнсенчен тырă турттарассисĕр пуçне, 1943 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа тракторсемпе транспорта тата ытти ĕçсенче СССР Совнаркомĕ ирĕк памасăр усă курма чарас.

13. Çапла тăвас: колхоз лашисене Оборонăн Государственный Комитечĕпе СССР Совнаркомĕ йышăннă постановленисем тăрăх кăна мобилизацилеме пулать.

14. Çураки вăхăтĕнче колхозсенче пĕр лаша пуçне е пĕр мăшăр ĕне пуçне, суха çине куçарса шутласан, çураки ĕçне çакăн чухлĕ гектартан кая мар тумалла йышăнас:

10 гектартан кая мар — Алтай, Хабаровск, Ставрополь, Краснодар крайĕсем тăрăх, Кемерово, Курган, Новосибирск, Омск, Челябинск, Чкалов, Куйбышев, Ульяновск, Саратов, Тамбов, Пенза, Ростов, Сталинград, Воронеж, Курск, Орел, Тула, Рязань облаçĕсем тăрăх, Башкир, Тутар, Калмык тата Мордва АССР-сем тăрăх;

9 гектартан кая мар — Казах ССР, Бурят-Монгол АССР, Горький, Иваново, Ярославль облаçĕсем тата Красноярск крайĕ тăрăх;

8 гектартан кая мар — Киров, Молотов, Мускав, Смоленск, Калинин, Ленинград облаçĕсем тăрăх, Удмурт, Кабардино-Балкар тата Мари АССР-сем тăрăх;

7 гектартан кая мар — Чита, Иркутск облаçĕсем тата Приморски край тăрăх;

6 гектартан кая мар — Архангельск, Вологда, Свердловск облаçĕсем тăрăх, Чăваш АССР тата Узбек, Таджик, Туркмен, Киргиз ССР-сем тăрăх;

5 гектартан кая мар — Якут, Коми, Дагестан, Çурçĕр-Осетин АССР-сем тăрăх тата Карело-Финн, Грузин, Армян, Азербайджан ССР-сем тăрăх.

15. Союзлă, автономлă республикăсен совнаркомĕсене, ĕçхалăх депутачĕсен совечĕсен облаçри тата крайри исполкомĕсене çаксене тума хушас:

а) колхозсемпе совхозсенчи туртакан вăйпа уй ĕçĕнче сарлакан усă курмалла, хуçалăхăн шалти ĕçĕсенче лашасен тата вăкăрсен вăйĕпе усă курассине чакармалла;

б) уйхир ĕçĕн калăпăшне, туртакан вăй мĕн чухлине тата çураки ĕçĕсен срокĕсене шута илсе, çурхи уйхир ĕçĕсен вăхăтĕнче кашни лаша пуçне тата пĕр мăшăр вăкăр пуçне мĕн чухлĕ ĕçлемеллине кашни район валли уйăрса памалла;

в) çурхи уйхир ĕçĕсен вăхăтĕнче колхозсемпе совхозсенчи ĕç выльăхне çитерме кирлĕ таран утă тата ытти выльăх апачĕ хатĕрлесе хурас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла;

г) çураки пуçланиччен пĕр уйăх малтан колхозсемпе совхозсене трудгужповинноçран хăтармалла, лашасемпе вăкăрсене уйхир ĕçĕсем пуçланиччен виçĕ эрне малтан лайăхрах апат çине тăратса канăç памалла;

д) çураки вăхăтĕнче ăна тивĕçлĕ срокра ирттерес тесен, кашни колхоза, туртăм вăйĕ мĕн чухлĕ кирлине шута илсе, пĕрлешÿллĕ кĕтÿрен тата колхозниксен хăйсен аллинчи ĕнесенчен сахал сĕт паракан ĕнесене уйхир тата транспорт ĕçĕсене хутшăнтарассине кашни район тăрăх план туса çирĕплетмелле. Пĕрлештернĕ ĕнесене тата колхозниксен хăйсен ĕнисене уйхир ĕçне хутшăнтармалли плана райисполкомсен кашни колхозах çитермелле.

16. Уйхир ĕçĕнче ĕнесем уйăрса вĕсемпе усă курас ответлăха колхоз председателĕсем çине, районсемпе колхозсенчи ветеринарипе зоотехника работникĕсем çине хурас. Уйăрнă ĕнесене çурхи уйхир ĕçĕн вăхăтĕнче пĕрлешÿллĕ кĕтÿрен уйхир бригадисене бригадир аллине памалла. Уйхир бригадисене уйăрса панă пур ĕнесене те бригадăри колхозниксем çумне çирĕплетмелле. Çавăн пекех ĕнесене пăхма, уйхир ĕçĕсем пĕтиччене, ĕне сăвакансем çумне çирĕплетсе хăвармалла. Ĕнесемпе усă курас тата ĕнесене пăхас ĕçре обезличкă пулмалла мар. Уйрăм колхозниксен çураки валли уйăрнă ĕнисемпе ĕни хуçи хăй ĕçлесси çирĕп йĕрке пулса тăмалла. Ĕнесемпе çăмăлрах ĕçсенче тата сывăхрах вырăнсенче усă курмалла. Ĕнесемпе ĕçлеме çемçе тавраш кÿлсен кăна юрать. Ăратлă ĕнесене уйхир ĕçне хутшăнтарма чарас.

17. Колхоз правленийĕсене çаксене тума сĕнес:

а) колхозра ĕнесемпе ĕçлекен колхозниксем валли, лашасемпе ĕçлеме колхозра йышăннă нормăсен $^1/_3$ пайне çирĕплетмелле, расценкăсене çавăн пекех хăвармалла. Ĕç нормисене тултаракан колхозниксене, вĕсем хăйсен ĕнисемпех ĕçлеççĕ пулсан, ĕçкунĕсене икшер хут ÿстерсе памалла;

б) колхозниксен обществăллă хуçалăхра ĕçлекен ĕнисене, колхозри пĕрлештернĕ выльăха апаталантармалли норма тăрăх выльăх апачĕ уйăрса памалла.

18. СССР Наркомземне, СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне, облисполкомсене, крайисполкомсене, союзлă тата автономлă республикăсен совнаркомĕсене, парти обкомĕсемпе крайкомĕсене, союзлă республикăсенчи компартисен Центральный Комитечĕсене çапла тума хушас:

а) 1943 çулта акма кирлĕ пур вăрлăхсене те — тĕштырăсен, техникăллă культурăсен, çĕрулмин тата апат-çимĕç культурисен вăрлăхĕсене 1943 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр пĕтĕмĕшпе хывса çитермелле, вăрлăхсен пахалăхне тата вĕсене мĕнле упраса усранине тĕплĕн, тăтăшах тĕрĕслесе тăрассине йĕркелемелле, çавăн пекех тата пахча-çимĕç культурисен вăрлăхĕсене хатĕрлесе хывассине те пурнăçа кĕртмелле; государствăна пама тивĕçлĕ тĕштырăсенчен тата çу каларакан культурăсенчен вăрлăх хывмалла мар;

б) колхозсем пĕр-пĕрин хушшинче начар шăтакан тĕштырăсене паха вăрлăхсемпе, тивĕçлине хушса тÿлемелле туса, улăштарса илес ĕçе организацилемелле;

в) кашни колхозра мĕнпур вăрлăх фончĕсене кладовщика уйрăм акт тăрăх йышăнтармалла. Çав актра кашни культура тăрăх вăрлăх фончĕсем мĕн чухлĕ, мĕнле пахалăхлă пулнине, çавăн пекех тата вĕсем мĕнле сортлă пулнине кăтартмалла;

г) 1942 çулта колхозсем пĕр-пĕринчен вăрлăх кивçен илнишĕн расчет туса çитермелле; ытти колхозсенчен вăрлăх кивçен илнĕ колхозсене, вĕсем государство умĕнчи обязательствăсене парса татнă хыççăн, çав вăрлăхсене халех тавăрса пама е укçан тÿлеме е тата, пĕр-пĕринпе калаçса татăлнă тăрăх, ытти ялхуçалăх продукчĕсемпе тÿлеме хушас;

д) колхозсем пĕр-пĕрне хăйсен ирĕкĕпе вăрлăхсем парса пулăшас ĕçе 1943 çулта та организацилемелле. Кунта вара çакăн пек йĕрке тумалла: пĕр-пĕрне пулăшас йĕркепе вăрлăх илекен колхозсен çав кивçен илнĕ вăрлăхсене 1943 çулти тырпулран тавăрса пама пулса обязательствăсем çырса парас пулать. Çапла йĕрке тăвас: çав обязательствăсем тăрăх, колхозсем хăйсем кивçен панă вăрлăха кивçен илекен колхозран, вăл государство умĕнчи хăйĕн обязательствисене тултарнă пулсан, çавăн хыççăн юлнă тырпулăн пĕр пайне пĕр сăмахсăрах шыраса илме пултараççĕ;

е) сутма тата ытти колхозсене кивçен пама уйăрнă вăрлăхсене колхозсенчен пĕр хатĕрлев пунктĕнче йышăнса, çав вăрлăхсене колхозсене ытти пунктсенчен пама Хатĕрлев Халăх Комиссариатне ирĕк парас;

ж) колхозсемпе совхозсенче вăрлăх фончĕсем мĕнлине тата вĕсене мĕнле условисенче усранине талккишĕпех тĕрĕслесе ирттерессине йĕркелемелле, палăрнă çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтермелле , тата вăрлăх фончĕсене пăснишĕн е хуçасăрла пăхса усранишĕн айăплă çынсене суд умĕнче ответ тыттармалла;

з) тĕштырă, пăрçа-ясмăк, техникăллă культурăсемпе курăк вăрлăхĕсене 1943 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех тасатса, сортласа пĕтермелле тата йышăннă стандарта çитермелле, кашни колхозра вăрлăх тасатакан машинăсене кирлĕ таран уйăрса хумалла, МТС-сенчи, Госсортфондри, Заготзернори тата ытти организацисенчи тĕштырă тасатмалли сложнăй машинăсемпе туллин усă курмалла, вĕсене икĕ сменăпа ĕçлеттермелле;

и) тулă, урпа, сĕлĕ, вир, йĕтĕн тата çĕрмамăк вăрлăхĕсене имçамсемпе сиплессине вăхăтра тата пĕтĕмĕшпех туса çитермелле; вăрлăхсене имçамсемпе сиплес ĕçре тĕрĕсленнĕ заменительсемпе усă курмалла;

к) колхозсемпе совхозсенче вăрлăхсен шăтас пахалăхне, нÿрĕлĕхне, вăрлăхсем тасипе тасамаррине, чирчĕрсемпе сиенлĕ хурт-кăпшанкăсенчен тасипе тасамаррине тĕрĕслесе тухмалла;

л) шăтас тĕлĕшпе кондициллĕ мар, анчах шăтма пултаракан вăрлăхсене, Лысенко академикăн меслечĕ тăрăх, çуркунне ирттерех çил çине çÿхе сийпе сарса пăрахса усăлтармалла, çапла тунă май, вĕсен шăтас пахалăхне вăрлăхсем тĕрĕслекен лабораторисенче тĕрĕслесе пымалла.

м) нÿрлĕ вăрлăхсем пур колхозсенче çав вăрлăхсене зерносушилкăсенче тата çак ĕç валли ятарласа тунă çуртсенче, типĕтмелли йĕркене çирĕппĕн тытса пырса, типĕтес ĕçе организацилемелле;

н) 1943 çулта акма палăртнă мĕнпур çĕр лаптăкĕ валли çĕрулми вăрлăхне хывмалла, çĕрулми вăрлăхĕ çитмест пулсан, вăрлăха колхозниксенчен сутăн е кивçен илес ĕçе йĕркелемелле. Колхозсемпе совхозсене çĕрулми вăрлăхĕсене, çавăн пекех тата касса хатĕрленĕ çĕрулми тăррисене мĕнле условисенче усранине тата вĕсем мĕнле пахалăхлă пулнине кулленех тĕрĕслесе тăма хушас;

о) Сортсемовощь конторисем контрактациленĕ пахча-çимĕç культурисен тата выльăх кăшманĕсен вăрлăхне хывса хăварас ĕçе 1943 çулти апрелĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр вĕçлемелле:

п) вăрлăх хывмалли плана тултарман колхозсенче, продовольстви валли тата выльăх апачлĕх хăварнă тымарсенчен суйласа илсе, 1943 çулти çуркунне лартмалли плана тултарма кирлĕ чухлĕ пахча-çимĕçсем уйăрмалла; вăрлăх хăварнă çимĕçсене пĕтĕмĕшпех сыхласа усрамалла, вĕсене салатса пĕтересрен тата усранă чухне пăсăлса каясран упрамалла.

19. Облисполкомсем, крайисполкомсем тата республикăсен совнаркомĕсем ыйтнă тăрăх, государство ресурсĕсенчен çу тумалли культурăсен ахаль вăрлăхсемпе улăштарса тата тивĕçлĕ эквивалентсем тăрăх продовольстви культурисен тĕшшисемпе улăштарса çу тумалли культурăсен сортлă вăрлăхĕсене пама СССР Наркомземĕпе Наркомзага право парас. Колхозсемпе совхозсем улăштармалли вăрлăхсене тата тĕштырра государствăн станцисемпе пристаньсенчи хатĕрлев пункчĕсене панă хыççăн кăна çу тумалли культурăсен вăрлăхĕсене улăштарса памалла.

20. Союзлă тата автономлă республикăсен совнаркомĕсене, ĕçсынни депутачĕсен облаçсемпе крайсенчи исполкомĕсене çураки тĕлне Сельхозснабăн склачĕсенчен, станцисемпе пристаньсенчи пунктсенчен мĕнпур минераллă удобренисене турттарса тухмалла тума хушас. Минераллă удобренисемпе, чи малтан, шăваракан çĕрсем çине акнă техникăллă культурăсене апат панă çĕрте усă курмалла.

21. Тырпул тухăçлăхне ÿстерес ĕçре тислĕк тата вырăнти ытти удобренисем уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăнине шута илсе, союзлă тата автономлă республикăсен сов-

Юлашки 2-мĕш страницăра.

СССР СОВНАРКОМĔПЕ ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕТĔНЧЕ

Государствăн 1943 çулта ялхуçалăхне аталантармалли планĕ çинчен

(Юлашки)

наркомĕсене, облаçсенчи, крайсенчи тата районсенчи исполкомсене çапла тума хушас:

а) кашни колхоз валлиех 1943 çулта уйхире вырăнти удобренисем тăкмалли план туса памалла, плана çемçетмелли çĕр лаптăкне кăтартмалла, пĕрлештернĕ выльăх-чĕрлĕх тислĕкĕпе пĕтĕмĕшпех усă курма тăрăшмалла, ăна пуринчен малтан техникăллă культурăсем, çĕрулми, пахча-çимĕç культурисем акмалли çĕр çине, çавăн пекех тата кĕр тырри акмалли хура пусă çине тăкмалла;

б) çуркунне кĕртырри калчисене, сахăр кăшманĕн, çĕрмамăкĕн, коксагызăн, кантăрăн, пахча-çимĕç культурисен тата çĕрулмин калчисене вырăнти удобренисемпе апат памалла;

в) удобренисене пухса турттарса тухма кашни бригадăрах ялан ĕçлекен колхозниксене уйăрмалла, удобрени турттарса тухма кашни кунхи заданисем туса памалла, вĕсене удобренисем турттарма ялан лăхах лашасем тата ĕçлекен вăкăрсем çирĕплетсе памалла, удобренисене турттарнă çĕрте пĕрлештернĕ ĕнесемпе тата колхозниксен хăйсен ĕнисемпе анлăн усă курмалла;

г) кашни колхозрах удобрени валли фекали, кĕл, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, çĕрĕк тăпри пухмалла, çавăн пекех тата тислĕкпе ытти удобренисене тĕрĕс сыхласа усрас пулать. Промышленноçри отходсемпе тата хуласенчи кил-çуртсенче пулакан каяшсемпе удобрени вырăнĕнче усă курассине организацилемелле, колхозсемпе совхозсене çав удобренисене турттарса тухма хулари транспортпа пулăшмалла;

д) торфлă вырăнсен çывăхĕнчи колхозсемпе совхозсенче тислĕке, тислĕк шывне, фекалие тата ытти каяшсене торфпа хутăштарса компост тăвассине организацилемелле, çавăн пекех тата торфпа выльăх витисен урайне сарса анлăн усă курмалла;

е) бактериллĕ удобренисемпе пĕтĕмĕшпех тата тĕрĕс усă курмалла, вĕсене хире тăкас тĕлĕшпе колхозсене конкретнăй заданисем памалла.

22. Колхозсен правленийĕсене çапла тума сĕнес:

а) выльăх-чĕрлĕх фермин заведующине тата старши конюха, вĕсем тислĕке нумай пухмалла, тĕрĕс сыхласа усрамалла тата пĕтĕм пухнă тислĕке вăхăтра хире турттарса тухмалла тунă пулсан, пĕр вăхăтлăха, хавхалантарас майпа, 10 ĕçкунĕнчен пуçласа 30 ĕçкунне çити хушса çырса памалла. Çак ĕçкунĕсене тислĕке хире турттарса тухнă хыççăн çырса памалла;

б) пĕрлешӳллĕ хуçалăх валли тислĕк паракан колхозниксене улăм тата выльăх витисенче сарма торф памалла, тислĕке тата витене сармалли торфа турттарма вĕсене транспорт памалла.

23. Пусу çаврăнăшне туса палăртнă, анчах ĕçе кĕртеймен колхозсене 1943 çул валли тырпул акма панă заданисем тăрăх пусуçаврăнăшне ĕçе кĕртмелли плансене тĕрĕсрех палăртма хушас, çакна тунă чухне тĕрлĕ культурăсене вĕсен умĕн мĕн акăннине шута илсе тĕрĕс вырнаçтармалла. Пусуçаврăнăш умĕн мĕн акăннине шута илсе лайăхрах вырнаçтармалла.

24. СССР Наркомземне, СССР Наркомсовхозне, союзлă тата автономлă республикăсен совнаркомĕсене, ĕççынни депутачĕсен облаçри тата крайри совечĕсен исполкомĕсене ялхуçалăх культурисен вредителĕсене хирĕç кĕрешес тĕлĕшпе тумалли ĕçсен планне палăртма хушас, çакăн чухне сиенлĕ черепашкăна, саранчасене, сахăр кăшманĕпе çĕрмамăкне сиенлекенсене, çавăн пекех тата кушаккайăксемпе йĕкехӳресене хирĕç кĕрешесси çине уйрăмăнах çаврăнса пăхмалла.

II. 1943 çулхи çуракинчи агротехникăллă мероприятисем çинчен

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çапла шутлаççĕ: 1943 çулти çурхи уйхир ĕçĕсен тапхăрĕнче уйхир ĕçĕсене пысăк пахалăхпа туса ирттерессси тата çуракине кашни культурăшăн агротехника тĕлĕшпе чи лайăх сроксенче туса ирттерессси чи кирлĕ ĕç пулса тăрать. Çавна пурнăçа кĕртме çакă кирлĕ:

1. Çурхи уйхир ĕçĕсем пуçланиччен кашни колхозрах уйхирсене улăмран, çумкурăк тунисенчен тата тырă вырнă хыççăн юлнă çӳп-çапсенчен тасатмалла, кирлĕ пулсан, кивĕ хăмăлпа çумкурăк тунисене çунтарса ямалла, кунта вара пушартан сыхланмалли мерăсене çирĕп тытса пымалла.

2. Çуркунне тăпра мĕнле ĕлкĕрсе пынине тĕплĕн тĕрĕслесе тăрас ĕçе организацилемелле, уйхир ĕçĕсене пуçлассине, уйрăмах çурхи сухана тытăнассине ниепле те кая хăвармалла мар. Тăпра мĕнлине кура, çурхи суха ĕçне чылай чухне ытти уйхир ĕçĕсенчен иртерех тытăнма пулать.

Уйхир ĕçĕсене (сӳрелессине, сухалассине, культиваци тăвассине, акассине), уйрăм участоксем типсе пынă май, пĕтĕм çĕр лаптăкĕ хатĕр пулассине кĕтсе тăмасăр, тытăнмалла.

3. Кĕрхи çĕртме тунă участоксене вăхăтра сӳрелес ĕç çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла, çав ĕçе çиелти тăпра кушăрханă самантран виçĕ-пилĕк кунтан кая хăвармасăр туса ирттермелле.

Çурхи суха тунă хыççăн сӳрелес ĕçе кая хăварма юрамасть.

Колхозсемпĕ МТС-сене çурхи уйхир ĕçĕсенче агрегатлă меслетсемпе анлăн усă курма сĕнес (сухаланă хыççăнах сӳрелемелле, кĕрхи çĕртмене культиваци туса, сӳрелесе пынă маях акмалла, якатса тухмалла, кĕрхи çĕртме сухине культиваци тăвассине, сӳрелессине, акассине, пĕрин хыççăн тепĕрне çийĕнчех туса ирттермелле, сухаламалла — сӳрелемелле — акмалла). Кунта тăпрана ĕçлесе çемçетес ĕçĕн тата вăрлăха çĕре лайăх хывса хăварас ĕçĕн пахалăхĕ çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхмалла.

Çурхи уйхир ĕçĕсене агрегатлă меслетпе ĕçлессине, уйхире 10—12 сантиметр тарăнăш сухаланă пулсан кăна, кĕрхи çĕртме тунă çĕре тарăнмар сухаласа çемçетнĕ хыççăн туса ирттерме пулать.

4. Колхоз правленийĕсене çапла тума сĕнес: кашни колхозра мĕнпур уйхир ĕçĕсене, вăл шутра çурхи суха тăвас ĕçе те, миçе ĕçкунĕнче тата миçе календарлă кунра туса ирттерессине шутласа хумалла, ирхи тата каярах акмалли культурăсене, кашни колхозăн уйрăм условийĕсене кура, мĕнле те пулин кĕскерех те лайăхрах сроксенче, тăпрара мĕнле те пулин ытларах нӳрлĕх сыхласа хăварса тата çумкурăкĕсене тĕплĕнрех пĕтерсе, акса хăвармалла пултăр.

Уйхирти çумкурăкĕсене пĕтерес, типĕ тата çурма-типĕ çанталăк тăракан районсенче тăпрари нӳрлĕхе ытларах пухса сыхласа хăварас, çуракине мĕнле те пулин кĕскерех сроксенче туса ирттерес шутпа, колхозсене çапла тума сĕнес: кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи типĕ çанталăк тăракан районсенче уйхир ĕçĕсем пуçланнă хыççăн пирвайхи çичĕ кун хушшинче, çурма-типĕ çанталăк тăракан Урал, Çĕпĕр тата Çурçĕр Казахстан районĕсенче пирвайхи вунă кун хушшинче малтан палăртса хунă пек вăхăтлă тарăн сухаласа хăварма май çук участоксене çурхи уйхир ĕçĕсен пирвайхи виçĕ-пилĕк кунĕ хушшинче, вăтамран, пилĕк сантиметр тарăнăш кăпкалатса хăвармалла.

Çавăн пек малтанлăха кăпкалатнă уйхирсенче, вĕсем çинче çумкурăкĕсен тымарĕсем хунаман пулсан, пĕр çул ӳсекен çумкурăкĕсем (сӳсен тата ыт. те) шăтнă пулсан, 10—12 сантиметр тарăнăш, суха кассине лайăх çаварттарса пăрахтарса тата шыйрăк хăвармасăр сухалама юрать, сухаланă хыççăнах вара çав çĕре сӳрелемелле.

Çумкурăкĕсен тымарĕсем (хăях, пиçен т. ыт. те) хунаса саралнă уйхирсене, вĕсене нӳрлĕхе сыхласа хăварас шутпа çуркунне иртерех кăпкалатнă пулин те, вăхăтлă тарăн сухаласа хăвармалла.

Вир акма палăртнă уйхирсенче, вĕсем çинче кĕрхи çĕртме сухи туман пулсан, çуркунне иртерех кăпкалатнисĕр тата уйхир ĕçĕсем пуçланнă хыççăн 10—15 кунран кая юлмасăр сухаланисĕр пуçне, (çумкурăкĕсем шăтса тухсан) тăпрана типĕтмен касăллă культиваторсемпе культиваци туса ирттермелле.

5. Тăпрара нӳрлĕх сыхласа хăварма май паракан суха умĕнхи ирхи кăпкалатас ĕçе хăвăрт туса ирттерес шутпа, колхозсемпе МТС-сене тата совхозсене çĕре анлăн кăпкалатса пыракан тракторпа тата лашапа ĕçлемелли хатĕрсем (лущильниксем, дисковăй сӳресем, тулă хирне сухаламалли плугсем, драпачсем тата ыт. те) çителĕклĕ таран тупса парас тĕлĕшпе республикăсен Совнаркомĕсене, облаçсенчи, крайсенчи исполкомсене тивĕçлĕ мерăсем йышăнма хушас.

Вырăнти промышленность предприятийĕсене, МТС-семпе МТМ-сене тата колхозсенчи тимĕрçĕсене çĕре анлăн кăпкалатмалли çĕнĕ хатĕрсем (драпачсем, сӳресем т. ыт. те) тăвас тата киввисене юсас тĕлĕшпе конкретнăй заданисем памалла.

6. Техникăллă культурăсем, пахча-çимĕçсем тата çĕрулми акма палăртнă çĕр лаптăкĕсене ирхи сроксенче таран сухаласа хăвармалла.

7. ССР Союзĕн кăнтăр-хĕвелтухăçĕнчи районĕсенче тĕштырă культурисене кĕрхи çĕртме тунă участоксенче те, çавăн пекех тата çуркунне сухаласа пăрахнă вырăнсенче те тăпрана хатĕрлесе çитернĕ хыççăн май килнĕ таран кĕске сроксенче, çийĕнчех рядовой сеялкăсемпе акса хăвармалла.

Çурма-типĕ çанталăк тăракан Çĕпĕр, Урал районĕсенче тата Казах ССР-ĕн çурçĕрти районĕсенче çаксене пурнăçа кĕртме пур мерăсене те йышăнмалла: кĕрхи çĕртме тунă уйхирте нӳрлĕхе апрельте сыхласа хăварас тесе, акма тивĕçлĕ çĕр лаптăкĕсене май килнĕ таран ытларах сухаласа тата сӳрелесе хăвармалла, май уйăхĕнче сухаланакан участоксенче нӳрлĕхе тытса хăвармалла, çурхи тулла апрелĕн юлашки кунĕсенче акма тытăнмалла, майăн 15—20-мĕш кунĕсем тĕлне кашни колхоз хуçалăхĕнчех акса пĕтермелле. Сĕлле çав районсенче майăн иккĕмĕш вунăкунлăхĕнче акма тытăнмалла.

Казах ССР Совнаркомне, Бурят-Монгол АССР Совнаркомне, Çĕпĕрти тата Ӳралти облаçсемпе крайсен исполкомĕсене, вырăнти опыта шута илсе, çураки пуçланмалли сроксене кашни район тăрăх уйрăмăн палăртса хума хушас.

8. МТС-сен директорĕсемпе колхозсен правленийĕсене МТС-семпе колхозсен мĕнпур рядовой сеялкисемпе туллин усă курма хушас. МТС ĕçе вăхăтра тăваймасăр çуракине вăраха ярать пулсан, ун пек чухне çуртыррине хăвăртрах акса пĕтермешкĕн колхозсене трактор сеялкисемпе акма уйăрса хунă çĕрсене лаша туртакан сеялкăсемпе акма сĕнес.

9. Вăрлăх акмалли нормăна пурнăçа кĕртсе пынине тата мĕнле пахалăхпа акнине хытă тĕрĕслесе тăмалла, вăрлăха нормăра кăтартниинчен сахалтарах акакансене тата ăна çĕре начар варса пыракансене ответ тыттармалла.

10. Совет Союзĕн кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнчи колхозсене сĕлле пăртак сахалтарах акма, типĕ çанталăк тăракан район условийĕсенче чи тухăçлă культура пулса тăракан урпана ытларах акма сĕнес.

11. Кĕрхи культурăсене çуркунне вăхăтра тата лайăх пăхассине пысăк вырăна хурса, вырăнти советпа парти органĕсене тата колхоз правленийĕсене çак ĕçсене тума хушас:

а) кĕрхи культурăсен калчисене тĕплĕн сăнаса тăрас ĕçе организацилемелле. Калчасем ытлашши шӳнипе çĕрме пултараççĕ пулсан, çавăн пек вырăнсенчен шыва вăхăтра урăх çĕрелле усса ямалла;

б) кĕрхи тырăсене, калчисем тăпăлса тухма пуçланисемсĕр пуçне, тата çемçе çĕре акнисемсĕр пуçне, пурне те сӳремелле;

в) кĕрхи тырăсен калчисем тăпăлса тухма пуçланă çĕрсене катокпа якатса пусарса тухмалла;

г) кĕрхи тырăсен калчисене вырăнти удобренисем (кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, тислĕк шĕвекĕ, кĕл, çĕрĕк тăпри т. ыт. те) салатса пăрахса мĕн май килнĕ таран иртерех тăрантармалла, чи малтан вăрлăхлăх, кĕрхи тулă тата ыраша сайра акнă вырăнсенче çавăн пек тумалла;

д) кĕрхи культурăсене, чи малтан тулла тата сайра акнă ыраша, çуркунне иртерех çумламалла;

е) кĕрхи культурăсене пăхас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене колхозсен çуракине ирттермелли ĕç планĕсене кĕртмелле.

12. Пĕтнĕ кĕрхи культурăсене тепĕр хут акмалла пулсан, вĕсене çуртыррисене акмалли план шучĕпе мар, унтан ирттерсе акмалла.

Республикăсен Совнаркомĕсене тата крайсемпе облаçсен исполкомĕсене пĕтнĕ кĕрхи культурăсене вăхăтра тепĕр хут акма хушас.

13. Хăйсемпе кӳршĕллĕ колхозсемпе совхозсен тырă акмалли çĕрĕсене, хальхи вăхăтра усă курманнисене, сухаласа акса хăйсен тырă акмалли çĕр лаптăкне ӳстерме тăрăшакан колхозсем ыйтнине шута илсе, çак вăрçă вăхăтĕнче облаçсемпе крайсен исполкомĕсене, республикăсен совнаркомĕсене тата СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне çакăн пек право парас: вĕсем колхозсемпе совхозсен тырă акмалли çĕрĕсене, хальхи вăхăтра усă курманнисене, çав колхозсемпе совхозсем килĕшнĕ тăрăх кӳршĕри уйрăм колхозсене пама пултарччăр. Акнă çĕр тăрăх государствăна ялхуçалăх продукчĕсем тăратмалли обязательствăсене вара çĕре сухаласа акакансем çине хурас.

III. Çум пусса илнĕ çĕрсем вырăнне темиçе çул хушши сухаланмасăр выртнă çĕрсемпе усă курасси çинчен тата Совет Союзĕн хĕвелтухăçĕнчи районĕсенче тырăсене пусăн-пусăн тĕрĕс вырнаçтарса тухасси çинчен

1. Облаçсемпе край исполкомĕсене тата парти обкомĕсемпе крайкомĕсене — районсемпе совхозсенче, райисполкомсемпе парти райкомĕсене — кашни колхозрах тĕрлĕ культурăсене мĕнле йĕркепе ылмаштарса акса пынине хирти ĕçсем пуçланаччен пĕлме хушас, 1943 çулта çуртыррисемпе кĕрхи тырăсене пусăн-пусăн тĕрĕс вырнаçтарма, тĕштырăсене 4—5 çул е унтан та ытларах вăхăт хушшинче тĕштырăсем хыççăнах акса пырассине пĕтерме хушас, çурхи тулла удобрени хушса çĕнетнĕ çĕр çине акма тата çум ытла та пусса илнĕ çĕрсене пĕр е темиçе çуллăха сухаламасăр хăварма хушас.

2. Колхозсен правленийĕсемпе совхозсен директорĕсене, темиçе çул хушши сухаланмасăр выртнă çĕрсем пуррисене, 1943 çултан пуçласа çав çĕрсемпе усă курма хушас, çав çĕрсем çине çуртыррисемпе кĕрхи тырăсем акма, çав çĕрсен ытла та начарланса çитнĕ е çум пусса илнĕ пайĕсене — хирсĕлли, карлык тата ытти çумкурăксем пусса илнĕ пайĕсене — темиçе çуллăха сухаламасăр хăварма хушас.

3. Облаçсемпе крайсен исполкомĕсене тата парти обкомĕсемпе крайкомĕсене — районсемпе совхозсем тăрăх, райисполкомсемпе райкомсене — колхозсем тăрăх апрелĕн 10-мĕшĕччен çак ĕçе туса ирттерме хушас: районсенче, МТС-семпе колхозсенче тата совхозсенче тракторсемпе чĕрĕ туртăм вăйĕ мĕн чухлĕ пуррине шута илсе, темиçе çул хушши сухаланмасăр выртнă çĕрсене 1943 çулта тата уйрăмăн 1944 çулта мĕн чухлĕ сухаласа акса хăвармаллине шутласа хумалла, çавăн пекех тата районсенче, совхозсенче тата колхозсенче начарланса çитнĕ е çум пусса илнĕ çĕрĕн мĕн пысăкĕш лаптăкне темиçе çуллăха сухаламасăр хăвармаллине кăтартса памалла.

4. МТС директорĕсене темиçе çул хушши сухаланмасăр выртнă çĕрсене облаçсемпе крайсен планĕсенче кăтартнă чухлĕ сухаласа акса хăварас ĕçе колхозсемпе договорсем тунă чухне МТС-сен тракторсемпе тумалли ĕçсен планне кĕртме хушас, вăл çĕрсене тракторсемпе сухаласа акма хушас.

5. МТС-сен директорĕсем, райзо заведующийĕсем, вĕсен главнăй агрономĕсем, МТС-сен старши агрономĕсемпе участковăй агрономĕсем темиçе çул хушши сухаланмасăр выртнă çĕрсене 1943 çулта сухаламалли плана пурнăçланăшăн тата ирттерсе тултарнăшăн, çав çĕрсем çине çуртыррисемпе кĕрхи тырăсене лайăх акса хăварнăшăн СССР Наркомземĕнчен пĕр уйăхри шалу чухлĕ преми илеççĕ.

6. СССР Наркомземне, Алтай тата Красноярск крайĕсен исполкомĕсене, Кемерово, Новосибирск, Омск, Курган, Челябинск облаçĕсен исполкомĕсене тата Казах ССР-ĕн çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчи облаçĕсен исполкомĕсене апрелĕн 1-мĕшĕпе майăн 10-мĕшĕ хушшинче колхозсене пулăшма тата 1943 çулта колхозсен хирĕсенче çуртыррисемпе кĕрхи тырăсене акмашкăн культурăсене тĕрĕс вырнаçтарса тухма агрономсене яма хушас; кашни агроном çумне 4—6 колхоз çирĕплетсе хумалла.

7. Наркомзема, СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне, облаçсемпе крайсен исполкомĕсене тата парти обкомĕсемпе крайкомĕсене çак тĕлĕшпе мерăсем йышăнма хушас: 1943 çулта хирсене культурăсем акнă чухне унта йышăннă пусуçаврăнăшĕсене пăсмалла ан пултăр. Колхозсемпе совхозсен темиçе çул хушши сухаланмасăр выртнă çĕрсем пулсан тата пусуçаврăнăшĕсем валли çĕрсем касса хунă пулсан, çав пусуçаврăнăшĕнче темиçе çуллăха сухаламасăр хăваракан пусă пултăр тесе, каснă çĕр çумне тата ик-виç пусă касса пама ирĕк парас.

8. Облаçсемпе крайсен исполкомĕсене, райисполкомсене, парти обкомĕсемпе крайкомĕсене тата райкомĕсене, районсемпе колхозсенче ĕçлеме пултаракан çын тата туртăм вăйĕ мĕн чухлĕ пуррине, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тата йышăннă пусуçаврăнăшне шута илсе, районсемпе колхозсене çĕр мĕн чухлĕ акмаллине кăтартса пама хушас; уйрăм районсемпе колхозсенче ĕçлеме пултаракан колхозниксемпе туртăм вăйне ытла йывăр килет пулсан, вĕсене панă задание чакарма юрать, анчах та вара пĕтĕм облаçра е крайра акнă çĕрĕн лаптăкĕ 1943 çулшăн кăтартса панă чухлех юлмалла.

9. Облаçсемпе крайсен исполкомĕсене, парти обкомĕсемпе крайкомĕсене кашни районпа кашни колхозах рыжик ытларах акма, типĕ тата çурма-типĕ районсенче — урпа ытларах акма план пама хушас; çак культурăсем чи час çитĕнекен тата тухăçлă культурăсем пулса тăраççĕ. Колхозсемпе совхозсене икĕ йышши тулă акма сĕнес: час çитĕнекеннине тата час çитĕнменнине.

10. Колхозсемпе совхозсен çум айне пулнă участоксемпе, темиçе çуллăха сухаламасăр хăвараканнисемпе, юнашар выртакан хирĕсене çум пусса ан илтĕр тесе, колхозсен председателĕсемпе совхозсен директорĕсене çав хирсенчи çумкурăкĕсене чечеке ларичченех çулса пăрахма хушас.

11. СССР Наркомземне, Алтай тата Красноярск крайĕсен исполкомĕсене, Кемерово, Новосибирск, Омск, Курган тата Челябинск облаçĕсен исполкомĕсене тата Казах ССР-ĕн Совнаркомне колхозсенче 1943 çулта пусуçаврăнăшĕсем тумалли плана 1943 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕччен çирĕплетме хушас; çав плана ăна облаçсемпе крайсенче тата республикăсенче землеустроительсен кадрĕсем тата çĕр йĕркелемелли материалсем мĕн чухлĕ пуррине шута илсе çирĕплетмелле.

12. СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне хĕвелтухăçĕнчи районсенчи мĕнпур совхозсенче пусуçаврăнăшĕсене 1943—1944 çулсенче пурнăçа кĕртме хушас, СССР Совхозсен Халăх Комиссариачĕн системинчи землеустроительсене çав икĕ çуллăх срока Совет Союзĕн хĕвелтухăçĕнчи районĕсенчи совхозсенче пусуçаврăнăшĕсене пурнăçа кĕртес ĕçе куçармалла.

13. Совет Союзĕн хĕвелтухăç районĕсенчи нумай колхозсемпе совхозсенче, пусуçаврăнăшĕсене пурнăçа кĕртменнисенче, темиçе çул хушши сухаланмасăр выртакан çĕрсем нумай пирки, Наркомземпа СССР Совхозсен Халăх Комиссариатне çавăн пек колхозсемпе совхозсенче пусуçаврăнăшне пурнăçа кĕртессине васкатма хушас, культурăсене тĕрĕс вырнаçтарса тухмашкăн пусуçаврăнăшĕнче темиçе çул хушши сухаланмасăр выртакан çĕрсемпе усă курма хушас.

* * *

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата ВКП(б) Центральный Комитечĕ вырăнти совет тата парти органĕсене çакна астутараççĕ: 1942 çулта пулнă пек, ялхуçалăх ĕçĕсене пурнăçа кĕртнĕ чухне конкретнăй условисене тата вырăнти опыта, çавăн пекех тата агрономсем кăтартса панине шута илмен сиенлĕ практика пулмалла мар; вăрçă условийĕсенче агротехникăллă тĕрĕс мероприятисемпе майсене, кашни колхозăн конкретнăй условийĕсенче ялхуçалăх культурисене ытларах туса илме май параканнисене, суйласа илсе пурнăçа кĕртес ĕçре колхозниксемпе агрономсен пуçарулăхĕн пĕлтерĕшĕ уйрăмах ӳсет.

Фронтовиксен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăх

Колхозсем фронтри юлташсен çемьисене вăйлăн пулăшаççĕ

КУКЕÇ. (Телефонпа). Районри колхозсем фронтовиксен çемьисене куллен пулăшса тăрассине хăйсен хисеплĕ тивĕçĕ тесе шутлаççĕ. Самуккассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ коммунистка Петрова) фронтовиксен 18 çемьине 15,5 центнер тырă, 43 сысна çури, 2 пăру, тумтирсем туянма 2.000 тенкĕ укçа парса тата 230 кубометр вутă турттарса пулăшнă.

М. Степанова колхозницăн упăшки фронтра. Унăн виçĕ ача. Унăн çемьине колхоз 88 килограмм тырă панă тата 19 лав вутă турттарса панă. Çавăн пекех В. Васильева колхозницăна 130 килограмм тырă, пĕр сысна çури тата 7 лав вутă турттарса панă.

Фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе уйрăмах Заводской ялсоветĕнчи колхозсем лайăх ĕçлеççĕ. Молотов ячĕпе тăракан колхоз фронтовиксен 57 çемьине сысна çурисем сутнă, 60 пăт тырă парса пулăшнă. «Красный флот» колхоз членне — Громов юлташа ĕне туянма колхоз кассинчен 15.000 тенкĕ укçа кивçен панă. «Красная заря» колхозра М. Васильева юлташăн çемьи пурăнать. Вăл фронт çывăхĕнчи районран куçса килнĕ. Колхоз ăна 60 пăт çĕрулми тата колхозниксем 30 пăт çĕрулми парса пулăшрĕç. Кунсăр пуçне тумтир илме 2.000 тенкĕ укçа панă, пĕр мăшăр çăматă панă.

«Молния» колхоз (председателĕ коммунист Иванов) фронтовиксен çемьисене 200 кубометр ытла вутă турттарса пулăшнă, 228 центнер тырă панă тата эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсене 4 мăшăр çăматă панă. Çавăн пекех Иккасси, Шемшер ялсоветĕнче те фронтовиксен çемьисене вăйлăн пулăшса тăраççĕ. Фронтовиксен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăхра районри колхозсемпе колхозниксем çак пулăшăва татах вăйлатаççĕ.

Т. Логинов.

Хĕрлĕ Çар боецĕсен çемьисемшĕн тăрăшни

ИШЛЕЙ. Хĕрлĕ Çар боецĕсен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăх районра аван пырать. Боецсен çемьисене лайăххрах пулăшасси çинчен сӳтсе-явма колхоз председателĕсен тата комсомолăн пуçламĕш организаци секретарĕсен канашлăвĕсене туса ирттернĕ. Вырăнти организацисене çав ĕçре пулăшса пыма 31 ялсовета çынсем янă.

Боецсен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăхăн малтанхи икĕ кунĕнче 45 центнер тырă, 49 центнер çĕрулмипе пахча-çимĕçсем, 120 килограмм какай, 18 килограмм çу, 6 килограмм пыл, çавăн пекех тата 2 пинжак, 11 аялтан тăхăнмалли кĕпе, 3 мăшăр атă-пушмак пухнă. Боецсен çемьисем пурăнакан 13 çурта юсаса панă. Çав хушăрах 70 кубометр вутă турттарнă, 2.040 тенкĕ укçа пуçтарнă. Боецсен çемьисем валли 22 сысна, пĕр сурăх уйăрса хунă. Эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ çемьесем валли 89 пахча уйăрса панă.

Боецсен çемьисене пулăшмалли вунăкунлăх пуринчен ытла Кипеккасси тата Етĕрнекасси ялсовечĕсенче аван пырать. Çак ялсоветсем 4 çемьене 0,15 гектар чухлĕ пахча-çимĕç лартма çĕр уйăрса панă, çĕрулми вăрлăхне те кирлĕ чухлех панă, çав çĕре çемçетме удобренисем турттарма лаша пăраççĕ. Боецсен çемьисем валли тумтир тата атă-пушмак туса парас енĕпе Ишлейри швейпромартельпе, Шетмĕпуçĕнчи атă-пушмаксем тăвакан артельпе калаçса татăлнă.

Çак ĕçе малалла та туса пыраççĕ.

М. Прохоров.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР-ĕнчи Госкредитпа гострудсберкассăсен управленийĕ çумĕнче государство заемĕсем выляса илнипе илменнине тĕрĕслекен бюро ĕçлет.

Çак бюро ĕçĕпе усă курас текенсен (облигаци тытакансен) уйрăм карточка çырса тултарас пулать. Унта облигаци серийĕн номерне, мĕнле заемне тата почта адресне кăтартас пулать. Çырнă карточкăсене управленине яма сберкассăна памалла.

Карточкăсене кирек хăш сберкассăра та 15 пус укçа тӳлесе илме пулать. Карточкăсем тӳлевсĕрех çӳреççĕ.

Чăваш АССР-ĕнчи Госкредитпа гострудсберкассăсен управленийĕ.

3—2.

СССР Промышленность банкĕн Чăваш республикинчи конторине инженер-строитель, машинистка, бухгалтерсем, кредитнăй инспекторсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтмалла: Шупашкар, Карл Маркс урамĕ, 27 (Госбанк çурчĕ).

2—1.

Чăвашпромстрахкассăна ялан ĕçлеме çакăн пек ĕçлекенсем кирлĕ: ĕç сыхлăхĕпе техника хăрушсăрлăхĕн инспекторĕ, старши оргинспектор, ачасен учрежденийĕсем тăрăх бухгалтер-ревизор тата страховой начисленисен бухгалтер-ревизорĕсем.

Çак адреспа ыйтмалла, Шупашкар, Кайбулка шывĕн хĕрри, 21 (Кожупряжь çурчĕ). Тел. 6—79 (икĕ звонок).

2—1.

Чувашшвейпромсоюза финанс пайĕн пуçлăхĕ, экономист-финансист тата бухгалтер ревизор кирлĕ.

3—2.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 663 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧА ССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 42 п.